

# Йывăç тымарĕпе çирĕп, этем – çемйипе

2024 Çемье çулталăкĕ

Проект Чăваш Республикин Цифра аталанăвĕн, информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин пулăшăвĕпе пичетленет. Авторĕ – Ирина Яковлева

## Ырă сăмах калама пĕлни – ăнăçу никĕсĕ

**Хут уйăрттарни пĕрре, ĕмĕр тăршшĕпе кăмăл-сипет тасалăхне, юратăва упраса хăварма пултарни вара тата пĕлтерĕшлĕрех.**

Кульцаври Зотовсем çемье чăмăртанăранпа çур ĕмĕр çитнине паллă тунă.

Александр Ивановичпа Галина Николаевнăна мăшăрлă пурнăçăн 50 çулхи юбилейĕпе округ администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ Алексей Фирсов, ЗАГС пайĕн ертӳçи Татьяна Филиппова, Кульцав территори пайĕн пуçлăхĕ Маргарита Павлова ăшшăн саламланă.

Зотовсенчен çемье вăрттăнлăхне пĕлтерме ыйтнă. Вĕсем пĕр-пĕрне ăнланни, итлеме, ырă сăмахсем калама пĕлни ăнăçу никĕсĕ пулнине палăртнă. Пурнăçра телей пилленĕ, ăс парса ырра вĕрентнĕ, çунатсем парса вĕçтернĕ ашшĕ-амăшне ачисем те ыр сăмахсем каланă.



Зотовсем.

Çемье пуçĕ – Александр Иванович çак тăрăхрах çуралса ӳснĕ. Ялта вăтам шкула пĕтернĕ хыççăн яш каччă Тăван çĕршыв умĕнчи таса тивĕçе пурнăçланă, çарта службăра тăнă. Салтак аттине хывсан Ленин ячĕпе хисепленекен колхозра водительте тăрăшма пуçланă.

Хăйĕн юратăвне, Галина Николаевнăна, Александр Иванович тăван ялтах тĕл пулнă. Çав вăхăтра пике колхозра зоотехникра ĕçленĕ. Галина Николаевна та Кульцаврах çуралса ӳснĕ.

Шкул хыççăн вăл сĕт-çу ферминче пăру пăхаканра ĕçленĕ, мĕн пĕчĕкренех аслă пĕлӳ илме ĕмĕтленнĕскер, ял хуçалăх институтĕнче зооинженери факультетĕнче вĕреннĕ. Хастар хĕр профком председателĕ те пулнă.

1974 çулхи августăн 31-мĕшĕнче Александр Ивановичпа Галина Николаевна туй кĕрлеттернĕ. Зотовсем ывăлпа хĕре кун çути парнеленĕ, пурнăçăн анлă çулĕ çине тăма пулăшнă. Халĕ Галина Николаевнăпа Александр Ивановичăн виçĕ мăнукпа пĕр кĕçĕн мăнук.

Мăшăрсем тăван колхозра пенсие тухичченех ĕçленĕ. Тивĕçлĕ канура пулсан та вĕсем обществăлла ĕçсенчен пăрăнмаççĕ. Галина Николаевнăна темиçе хутчен те вырăнти депутатсен Пухăвĕн депутачĕ пулма шаннă.

Алла-аллăн темиçе теçетке çул шăкăл-шăкăл пурăнасси, ачасене тĕрĕс воспитани парасси, мăнуксене çитĕнтерме пулăшасси çăмăлах мар. Пирĕн юбилярсем вара чăннипех маттур. Пĕрпĕринпе килĕштерсе пурăнакансем йывăрлăхсене çăмăллăнах çĕнтерме пултараççĕ. Кил-çуртра та вĕсен тирпей-илем хуçаланать, хушма хуçалăхĕ те çирĕп.

Çул хыççăн çул иртсен те мăшăрсен куçĕсенче çаплах юрату çулăмĕ ялкăшать, чĕрисем те пĕр пек тапаççĕ. Зотовсем тăванĕсене, çитĕнекен ăрăва паха тĕслĕх кăтартаççĕ.

**Елена ПОРФИРЬЕВА**

## Тăван кил туртăмĕ вăйлă



Профилактика канашĕ.

**«Кашни çыннăн е уйрăм халăхăн шăпине виçĕ юрату татса парать – ачасене юратни, ĕçе юратни, Тăван çĕршыва юратни», – тенĕ паллă ăсчах, профессор, этнопедагогикăна никĕслекенĕ Геннадий Волков.**

Ятлă-сумлă академик ачасене воспитани парасси тăван атте-анне килĕнчен пуçланать, тенĕ.

Паллă ентешĕмĕр ашшĕ-амăшĕн килĕ çинчен ăшшăн çапла аса илнĕ. «Тăван кил туртăмĕ питĕ вăйлă, унăн вăйĕ асамлă. Атте-анне килĕ – çĕр çинчи чи хаклă вырăн. Ылтăн сăпка»…

Çапла вара, тивĕçлĕ ăру çитĕнтерес ĕçре пĕлтерĕшли – çемье… Ачапча мĕн пĕчĕкрен ăшпиллĕ юрату, ăнлану витĕмĕпе киленсе ӳсет, çитĕннĕ май ыррине ытларах ăша хывать пулсан, пурнăçра вăл çураçуллă, çирĕп чунлă пулса çитĕнет.

Ашшĕ-амăшĕн тивĕçĕ çинче те нумай чарăнса тăнă пирĕн академик Геннадий Волков. Ашшĕ-амăшне кура ачисем тесе каланă ваттисем. Чăн та çапла, ашшĕ-амăшĕ мĕнле тĕслĕх кăтартать, ачисем те çавнах тума тăрăшаççĕ.

Ачара ырă енсене аталантарас тесен аслисен хăйсене йĕркеллĕ тытмалла.

Калинино территори пайĕн администрацийĕнче право йĕркисене пăсасран профилактика ирттерес тĕлĕшпе черетлĕ канашлу иртнĕ. Ун чухне комисси, çав шутра Калинино территори пайĕн пуçлăхĕ Людмила Иванова тата ертсе пыракан специалист-эксперт Татьяна Павлова, ăнăççăр çемьесем тăрăх рейда тухнă. Вĕсенче ачасене вĕренӳ çулне мĕнле хатĕрленине, кил-çуртра пушар хăрушсăрлăхĕн йĕркисене уянине пăхнă. Интернетпа телефон мушенникĕсем çинчен аса илтернĕ. Тĕрĕслев пĕтĕмлетĕвĕсем тăрăх М. тата А. çемйисене профилактика учетĕнчен кăларма йышăннă.

**Елена ТОЛСТОВА**



## Ачасем – пурнăç чечекĕсем

**Çемье çулталăкĕнче çемье хаклăхĕсем пирки тăтăшах калаçаççĕ. Ачасем – пурнăç чечекĕсем, теççĕ. Паян вара шăпах та шăпăрлансене чĕрчунсене юратма вĕрентесси пирки калаçăпăр.**

Чĕрчунсене юратни – пысăк туйăм. Вăл ачапчара хĕрхенĕве, ырă кăмăллăха аталантарать, çынсене пулăшас туйăма вăратать. Чĕрчунсене юратакан çын иттисене те хисеплет.

– Пĕчĕккисем йытăсемпе е кушаксемпе мĕнле вылянине асăрханă пуль. Мĕн чухлĕ ачашлăхпа ăнлану вĕсенче, – каласа пачĕ Вăрнарти тĕп больницăн инфекци уйрăмĕн аслă медицина сестри Алена Константинова. – Килти йытта е кушака ачашласа пăхакан ача та вĕсене çапма нихăçан та патак илмест. Анчах та, шел те, хăшпĕр çитĕннисем пĕчĕк шăпăрлана чĕрчунсем çыртассипе хăратма тăрăшаççĕ, вĕсене хăваласа яма хăнăхтараççĕ.

Килти чĕрчунсемпе хутшăнни ачана савăнтарать, вăл лăпкăрах пулать, туслăха хаклама вĕренет. Çамрăк ăрăвăн пĕчĕкренех яваплăх туйăмĕ çуралать. Çитĕнсен вара çирĕп çемье çавăрать.

Çавăн пекех ачасене ют чĕрчунсене кил хуçийĕсем ирĕк памасăр тĕкĕнме юраманни çинчен асăрхаттармалла, килсĕр-çуртсăр йытăсенчен асăрханма вĕрентмелле.

**Елена ТОЛСТОВА**

## Пулăшу тĕрлĕ енлĕ

**Чăваш енре 18 пин ытла нумай ачаллă çемье пурăнать, вĕсен йышĕ 2012 çултанпа 2 хут ӳснĕ. Раççей Феерацийĕн Президенчĕн Указĕпе килĕшӳллĕн, вĕсене тĕрлĕ пулăшупа тивĕçтереççĕ.**

Юлашки çулсенче Чăваш енре мăшăрсем уйрăлнин йышĕ самай чакни пурсăмăра та хавхалантарать. 2023 çул пĕтĕмлетĕвĕсем тăрăх, республика асăннă кăтартупа Раççейре 3-мĕш вырăн йышăннă.

«Юлашки 3 çулта Чăваш ен Президент йышăнăвне тĕпе хурса, нумай ачаллă çемьесене тĕрев парас тесе хушма мерăсем пăхса хăварнă, вĕсен шучĕ 17-е çитĕ. Пурăнмалли çурт-йĕр условийĕсене лайăхлатассишĕн сахал мар ĕçленĕ. Ача-пăчаллă çемьесем валли инфраструктурăна аталантарма вĕрентӳ, сывлăх сыхлавĕ, культура, спорт енĕпе 544 объект тунă. Чылай объекта тĕпрен юсаса çĕнетнĕ», – пĕлтернĕччĕ нумаях пулмасть Чăваш ен Пуçлăхĕ Олег Николаев. Çитĕнекен яш-кĕрĕмĕн ăс-хакăл тĕнчине пуянлатса пыма, пушă вăхăта усăллă ирттерме Шупашкар, Çĕмĕрле тата Канаш хулисенче, акă, «Нумай функциллĕ çемье центрĕсем» ĕçлеççĕ.

Авăн уйăхĕн 1-мĕшĕ тĕлне нумай ачаллисем тӳлевсĕр шкул тата спорт формисене тивĕçнĕ. Çемьесем физкультурăпа спорт организацийĕсене çӳреме çăмăллăх мерисемпе те усă кураççĕ. Пурăнмалли çурт-йĕршĕн тата коммуналлă пулăшу ĕçĕсемшĕн тӳлемелли компенсаци илме (30% виçепе), ачасене шкулчченхи ача-пăча учрежденийĕсене чи малтан йышăнма тата вĕренекенсене шкул тата спорт формипе тивĕçтерме ирĕк илнĕ.

17 çулчченхи ачасем валли панă пĕрлĕхлĕ пособисен калăпăшĕ самай ӳснĕ – вăл 2023 çулхи кăтартуран пысăкрах. Пĕлтĕр 17 çула çитмен тата çире пур хĕрарăмсем валли пĕрлехи пособие 56 пин ытла çын илнĕ. Çемьесене çак тĕллевпе пĕтĕмпе 9 млрд ытла тенкĕ куçарса панă. Кăçал та ку ĕçе тăснă.

Пĕтĕмпе 2012 çултанпа 16 пин çемье федераллă тата регионти амăшĕн капиталĕпе усă курнă.

2023 çултанпа 487 çемье нумай ачаллă çемье тӳлевсĕр çĕр лаптăкĕ вырăнне 250 пин тенкĕ укçапа танлашакан сертификатпа усă курнă. 7 тата ытларах ачаллă çемьесем валли пурăнмалли çурт-йĕр илме черете чакарнă. 2023 çултан 6 тата ытларах ачаллă çемьесем те ку пулăшăва тивĕçме пултараççĕ.

Унсăр пуçне çемьесен ырлăхне ӳстерме «социаллă контракт» пулăшу форми пурнăçланать. Унпа усă курса, патшалăх тĕревне илсе, 16 пине яхăн çын хăйсен бизнесне йĕркеленĕ.

Çемье çулталăкĕнче çĕршыв Президенчĕ чылай пысăк тĕллев лартнă. Кашни çын патшалăх тимлĕхне туйтăр, малалла шанчăклăн пăхма пултартăр тесе нумай çĕнĕ мерăсем пăхса хăварнă. Олег Николаев нумай ачаллă çемьесен форумĕнче каланинчен: «Çемьере ача пуласси пирки кашни хĕрарăм йышăну тутăр, кашни ача хăйĕн ĕмĕчĕсем пурнăçланасса шаннине туйтăр, çакна валли юлашки çулсенче питĕ нумай тăрăшаççĕ. Шкулсем, ача сачĕсем, ӳнер шкулĕсем, вулавăшсем тата ытти объектсем те çĕнелсе улшăнаççĕ, вĕсем çынсемшĕн питĕ усăллă. Чи кирли – ĕмĕрхи йăла-йĕркесене манас марччĕ, вĕсене тĕпе хурса çитĕнекен ăрăвăн ăс-хакăл тĕнчине пуянлатса пыма тăрăшасчĕ».